# Хăй ĕмĕрне тивĕçнĕ Шашков...

**Пирĕн паллă ентешĕмĕр — Раççей Федерацийĕн наукăпа техникăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ XX ĕмĕрĕн космонавтика тапхăрĕн историне хăй ятне ылтăн сас паллипе çырса хăварчĕ. Эпир сумлă ăсчах — полковник ĕçĕ-хĕлĕпе, унăн тĕллевлĕ кун-çулĕпе чăннипех мухтанатпăр. Паллă ăсчах И. Е. Шашков профессор çуралнăранпа 100 çул çитрĕ.**



В. КОНСТАНТИНОВ

Нумай ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ Йăван. Килйышра унсăр пуçне Пăлаки, Матвей, Натек, Марье, Анни, Санька ӳснĕ.

Ашшĕ, Ефим Абрамович, хăй сыпăкăн-сыпăкăн çеç вулама тата çырма пĕлнĕскер, этемшĕн пĕлӳ пурнăç çăл куçĕ пулнине аван ăнланнă. Çавăнпа пепкесене, уйрăмах арçын ачасене, вĕрентмех тăрăшнă. Матвей Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕлӳ пухнă. Хăй ирĕкĕпе пĕрремĕш тĕнче вăрçине кайнă. Хăюлăх кăтартса, Георги хĕресĕн IV тата III степенĕсене илме тивĕç пулнă. Кайран тăван килĕнче пуçламăш шкул уçнă, ял ачисене хутла вĕрентнĕ.

И. Шашков 1909 çулхи май уйăхĕн (çу уйăхĕн) 29-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе) çут тĕнчене килнĕ. Упири 6 çул вĕренмелли, Çĕрпӳри 2 сыпăклă шкулсенче пĕлӳ илнĕ. Ленинградри патшалăх университечĕн математикăпа механика факультетĕнче пĕлӳ пухнă.

Мĕн пур йывăрлăха çĕнтерсе (пысăк хулари выçăллă-тутăллă пурнăç, ялти кĕвĕç чунлă çынсем "кулак" ачи пирки çӳле пĕлтерне хыпар), 1935 çулта Мамçа çамрăкĕ ЛПУран вĕренсе тухса алла диплом илет. 224-мĕш заводра инженер-расчетник ĕçĕнче тимлет.

Хăрушă вăрçă пуçлансан Е. И. Шашков хăй ирĕкĕпе фронта тухса каять. Июлĕн 2-мĕшĕнчен халăх ополченийĕн вут-хĕм взвочĕн командирĕ пулса тăрать. Ноябрьтен пуçласа çулталăк çурă хушши танксене хирĕç кĕрешекен 596-мĕш артполк командирĕн техника енĕпе ĕçлекен сумĕ пулса фашистсене хирĕç çапăçать. Синявино тăвĕсем патĕнче йывăр аманать, контузи илет. Ленинграда хӳтĕленĕ тата блокадăна татнă чухне паттăрлăх кăтартнăшăн пирĕн ентеше II степеньлĕ Отечественнăй вăрçăн орденĕпе икĕ хут наградăлаççĕ. Вăрçă хыççăн И. Шашков хăй кун-çулне çĕр шывăн çар хăватне ӳстерес, тĕнче уçлăхне тĕпчес ĕç-хĕле халаллать. Унăн малашнехи пурнăçĕ "вăрттăнлăх" чаршавĕпе витĕннĕ. Чылай вăхăт ун çинчен çырма та, калаçма та юраман. Вăл çĕр-шывăн ракета çарне аталантарас тĕллевпе ырми-канми вăй хунă.

1946—1950 çулсенче Мамçа çынни инçе вĕçекен пирвайхи ракетăсен çирĕплĕхне ăсталас, вĕсене тăвас тата полигонра тĕрĕслес енĕпе ĕçленĕ. 1950 çулта пирĕн ентеш СССР Оборона министерствин 4-мĕш наукăпа тĕпчев институчĕн коллективĕнче (пĕрремĕш çын!) техника наукисен кандидачĕн ятне илме тивĕç пулать. Тепĕр вунă çултан вăл — доктор, профессор.

Кун-çулĕн 52 çулне çĕр шыва хӳтĕлес тата тĕнче уçлăхне тĕпчес ĕçе халалланă. 1957 çулта Байконуртра континентсене вĕçекен баллистика пĕрремĕш ракета — Р-7 тĕрĕслеври иккĕмĕш минутра сирпĕнсе каять. С. Королев тĕп конструктор сăнав стартне киноаппаратпа ӳкерсе илнĕ. И. Шашкова авари сăлтавне тĕпчекен комисси председательне çирĕплетет. Иван Ефимовичпа юлташĕсем лару-тăрăва тĕрĕс хакласа кирлĕ хутсем тăратаççĕ.

Шăпах çакнашкал Р-7 ракета тӳпене 1961 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче Юрий Гагаринăн "Восток-1" карапне, çĕклесе хăпартнă та. 1959—1962 çулсенче Иван Шашков профессор вĕçекен ятарлă аппаратсемпе носительсен çирĕплĕхĕпе конструкцийĕсене тĕрĕслекен лаборатори пуçлăхĕ пулнă. Пĕр çул наука енĕпе ĕçлекен управлени пуçлăхĕ, 1966—1969 çулсенче вĕçекен ятарлă аппаратсен пай пуçлăхĕ.

И. Шашков инженер-полковник 150 ытла наука ĕçĕ, 3 монографи çырнă, 12 ăслай авторĕ.

Пĕтĕм пурнăçне çар тата космос промышленноçĕн хăватне ӳстерме, вĕсем валли ăста инженерпа техника кадрĕ хатĕрлес ĕçе халалланă. Вăл наукăн икĕ докторĕпе 9 кандидатне хатĕрленĕ. Ентеш ертсе пынă çулсенче ăслăлăх канашĕ 27 докторпа наука кандидачĕн диссертацийĕсене йышăннă.

Çĕр-шыв Иван Ефимович инженер-конструктор ĕçне манман. Çар хăватне ӳстерес çĕрти тăрăшулăхне хакласа, ăсчаха 1952 çулта "Çапăçури тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" медальпе наградăланă. Ӳкерчĕкре (çӳлте) эсир СССР маршалĕ С. М. Буденнăй пирĕн ентеше çав ятпа чысланă самантa куратăр. Пирĕн район çынни — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕн, С. Королев ячĕллĕ медаль (пурĕ 21 медаль) тата Отечественнăй вăрçăн 3 орденĕн кавалерĕ те.

Иван Шашков Чăваш тăрăхĕнче те пулкаланă. Иккĕмĕш сыпăкри тăванĕсемпе туслă çыхăну тытнă. 1964 çулхи тепĕр тапхăр: Иван Ефимовичпа унăн усрав ывăлĕ Владимир (хĕр ачана йăтнă) Шупашкарти Антонина Кондратьевна (тăрать) патĕнче хăнара (аялти ӳкерчĕкре).

